**Спорт**

# Спорт уявне ҫумӑрлӑ ҫанталӑк та пӑсаймарӗ

Сентябрь ҫурринче районта хамӑрӑн ентешӗмӗрӗн Барселонӑри олимп чемпионкин В. Егорован парнисене ҫӗнсе илессишӗн ҫӑмӑл атлетикӑпа ӑмӑрту ирттересси йӑлана кӗнӗ ӗнтӗ. Малтан район шайӗнче иртнӗскер, пыра-киле республика шайӗнчи ӑмӑртӑва куҫрӗ. Иртнӗ шӑмат кун ҫанталӑк ҫумӑрлӑрах тӑчӗ пулин те, Муркашри стадиона паллӑ ентешӗн парнисене ҫӗнсе илессишӗн иртекен район (физкультура коллективӗсем хушшинче) тата республика (шкул ачисем хушшинче) шайӗнчи ӑмӑртусене халӑх йышлӑн пухӑнчӗ. Старта тухакансем кӑна 950-ӑн пулчӗҫ.



Муркашсем хӑнасене яланах хавас.

–Паянхи ҫанталӑк кросӑн чӑн-чӑн йывӑрлӑхӗсене кӑтартса пачӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех пирӗн чӑтӑмлӑхпа малтуртӑмлӑха та тӗрӗслерӗ. Спорт уявӗ уявлах иртрӗ, – терӗ район пуҫлӑхӗ Ю. А. Иванов. Ку вӑл кайран, ӑмӑрту вӗҫленсен.

Спорт уявне хаваслӑ лару-тӑрура уҫнӑ май, чи малтан вара Юрий Александрович пурне те трасса ҫинче ӑнӑҫу сунчӗ. Муркашсемпе пӗрле ҫак кун спортри хӑйсен ҫивӗчлӗхне Красноармейски (вӗсем темиҫе команда тӑратрӗҫ), Ҫӗмӗрле, Хӗрлӗ Чутай, Ҫӗрпӳ, Вӑрмар, Йӗпреҫ районӗсенчи, кӳршӗллӗ Марий Эл Республикинчи, Шупашкарти олимп резервӗсене хатӗрлекен шкулти ачасем кӑтартрӗҫ.

– Муркаш ҫӗрӗнче спортра пысӑк ҫитӗнӳсем тӑвакан сахал мар ывӑл-хӗр ҫитӗнчӗ. Вӗсем республика чысне ҫеҫ мар, Раҫҫей чысне те хӳтӗлеҫҫӗ, – терӗ ЧР физкультура, спорт тата туризм министрӗн пӗрремӗш ҫумӗ Ю.М. Николаев хӑйӗн салам сӑмахӗнче.

– Паянхи ӑмӑрту чылайӑшӗшӗн пысӑк ҫитӗнӳсен пуҫламӑшӗ пултӑр. Район пуҫлӑхӗн ҫак сӑмахӗсем те кашнинех хавхалантарчӗҫ. Валентина Егорован пысӑк ҫитӗнӗвӗсем те шӑпах малтанхи ҫӗнтерӳсенче туптаннӑ-ҫке. Ҫавӑнпа та Валентина Егорова “хамӑн та сирӗнпе пӗрле чупас килет” тени те ахальтен каланӑ сӑмахсем мар пуль.

– Юрататчӗ Валентина ҫакӑн пек сӑртлӑ-туллӑ вырӑнсене, – аса илӳпе илемлетрӗ хӑйӗн калаҫӑвне ентешӗмӗрӗн спортри тусӗ Алина Иванова, ӑмӑртӑва хутшӑнакансене ӑнӑҫусем суннӑ май. Спортра пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ ентешӗмӗрсем Л. Григорьева, Н. Охотникова тата ыттисем саламларӗҫ.

“Единая Россия” политика партийӗн пирӗн районти уйрӑмӗ ячӗпе спорта юратакансене асӑннӑ партин пирӗн районти политканашӗн секретарӗн ҫумӗ, ЧР Сывлӑха сыхлас ӗҫ тата социаллӑ аталану министерствин пирӗн районти социаллӑ хӳтлӗх пайӗн ертӳҫи Н.П. Петрова саламларӗ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл “Единая Россия” халӑх пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн тӑрӑшнине палӑртрӗ. Ӑмӑртӑва хутшӑнакансене лайӑх кӑмӑл, ҫирӗп сывлӑх сунчӗ. Муркашсен Шупашкарти ентешлӗхӗн ячӗпе П. Н. Вязов саламларӗ ӑмӑртӑва хутшӑнакансене.

Чи малтанах вара старта шкул ачисем тухрӗҫ. 1997 ҫулта ҫуралнӑ тата ку ӳсӗмрен те кӗҫӗнрех арҫын ачасемпе хӗрачасем пурте 1 километра чупрӗҫ. Арҫын ачасенчен финиша чи малтан Тойкилтӗ шкулӗнчи Г. Иванов вирхӗнсе ҫитрӗ. 3 минут та 8 ҫеккунт кирлӗ пулчӗ ӑна ҫӗнтерӳ тума. Унран икӗ ҫеккунт ытларах каярах юлса Калайкасси шкулӗнчи С. Николаев ҫитрӗ, ун хыҫҫӑн – А. Петров (Тойкилтӗ шкулӗ).



Стартра – пӗрле, финиша кам малтан ҫитӗ?



Чӑваш Республикин физкультура, спорт тата туризм министрӗ А.А. Николаев ҫӗнтерӳҫӗсене саламлать.

Ҫак ӳсӗмри хӗрачасем хушшинче вара малти 3 вырӑна В. Васильева (Муркаш шкулӗ), М. Семенова (Шатракасси шкулӗ), Л. Вилюкова (Горномарийски районӗ) пайларӗҫ.

1995-1996 ҫулсенче ҫуралнӑ шкул ачисен хӑйсен ҫӗнтерӳҫисем. 2 километрлӑ дистанцие арҫын ачасенчен чи малтан Ҫӗрпӳ районӗнчи М. Филиппов вӗҫлерӗ. 2 тата 3 вырӑнсем вара Муркаш районӗн ачисен пулчӗҫ. Калайкасси шкулӗнчи И. Гавриловпа Очӑкассинчи Е. Даниловӑн.

Ку ӳсӗмри хӗрачасем 1 километрлӑ дистанцире ӑмӑртрӗҫ. Вӑрмар районӗнчи М. Васильева старта тухнӑранпа 3 минут та 5 ҫеккунт кӑшт иртсен персе ҫитрӗ финиша. Хыҫҫӑнах ӑмӑртӑва хамӑр районти Панкли шкулӗнчи А. Филиппова вӗҫлерӗ. Унран ытлашши каях юлмарӗ Хӗрлӗ Чутай районӗнчи А. Патьянова та.

1993-1994 ҫулсенчи арҫын ачасем хушшинче Красноармейски районӗн ачисем ҫивӗчрех пулчӗҫ. 2 километрлӑ дистанцире Л. Ильин ҫӗнтерчӗ. Ҫак районти Н. Львов 3 вырӑн хуҫи пулса тӑчӗ. Вӑт, 2 вырӑна Муркашсем хӑйсемех йышӑнчӗҫ: Калайкассинчи С. Быкова ҫакна валли 6 минут та 2 ҫеккунт ытларах ҫеҫ кирлӗ пулчӗ.

Ҫак ӳсӗмри хӗрачасем хушшинче вара малти виҫӗ вырӑна тӗрлӗ район хӗрӗсем пайларӗҫ. 1 километра чупма пӗрре те йывӑр пулмарӗ Красноармейски районӗнчи А. Антоновӑна, Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Е. Триковскаяпа Йӗпреҫ районӗнчи И. Чернова 2 тата 3 вырӑнсене тухрӗҫ.

1991-1992 ҫулсенчи арҫын ачасенчен 3 километр вӑрӑмӑшӗнче Шупашкарти П. Еремеева ҫитекенни пулмарӗ: 8 минут та 42 ҫеккунт ытларах вӑхӑт кирлӗ пулчӗ ӑна ҫӗнтерӳ валли. Ун хыҫҫӑн вара финиша пӗрин хыҫҫӑн тепри пирӗн районти Калайкасси шкулӗнче вӗренекенсем вирхӗнсе ҫитрӗҫ: С. Акимов тата А. Смирнов.

Вӑт, ку ӳсӗмри хӗрачасем хушшинче Шупашкарти олимп резервӗсем хатӗрлекен шкулта вӗренекен хӗрачасем хӑйсем ӑҫта вӗреннине чӑннипех те ҫирӗплетсе пачӗҫ: 2 километра малтан вӗҫлекенсем виҫҫӗшӗ те унтан пулчӗҫ: К. Сымалкина, И. Романова, О. Мадеева.

Малти виҫӗ вырӑна тухнӑ вӗренекенсем дипломсемпе парнесене тивӗҫрӗҫ.

Пӗтӗмпе шкул ачисен 33 команди ӑмӑртрӗ ҫак кун. Вӗсенчен 10 команди – ытти районсенчен. Командӑсем хушшинчи парнеллӗ виҫӗ вырӑна йӑлтах Муркаш районӗн командисем йышӑнчӗҫ. Пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулсенчен Сосновкӑсем ҫӗнтерчӗҫ. 2 тата 3 вырӑнсене Шатракассисемпе Очӑкассисем тухрӗҫ. Пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулсенчен чи ҫивӗччисем Тойкилтӗсем пулчӗҫ. Хыҫҫӑнхи парнеллӗ вырӑнсене Калайкассисемпе Ярапайкассисем пайларӗҫ.

Шкул ачисем хыҫҫӑн старта предприятисемпе организацисен, учрежденисен, ял тӑрӑхӗсен командисем тухрӗҫ. Пӗтӗмпе 14 команда. Вӗсенчен 9-шӗ – ял тӑрӑхӗсен командисем. Ӑмӑрту Катькас ял тӑрӑхӗнче спорт ҫине тимлӗх ытларах уйӑрнине кӑтартса пачӗ. Ку тӑрӑхри спорта юратакансем 1 вырӑна тухрӗҫ. Муркаш тата Юнкӑ ял тӑрӑхӗсенчен килнӗ командӑсем те дипломсемпе парнесемсӗр юлмарӗҫ. 2 тата 3 вырӑн вӗсен пулчӗ-ҫке.

Чупакансене уйрӑммӑн илес пулсассӑн, арҫынсенчен (2 км чупрӗҫ) малтанхи икӗ вырӑна Юнкӑсем тухрӗҫ: А. Иванов, П. Михайлов. 3 вырӑн вара Муркаш ял тӑрӑхӗнчи П. Охотниковӑн пулчӗ.

Хӗрарӑмсенчен 1 километрлӑ дистанцие чи малтан вӗҫлекенни Катькас ял тӑрӑхӗнчи С. Максимова пулчӗ. Ку тӑрӑхри Н. Ильина финиша иккӗмӗш, Юнкӑ ял тӑрӑхӗнчи Т. Ефимова виҫҫӗмӗш ҫитрӗҫ.

Ҫанталӑк ҫумӑрлӑрах тӑни те ҫак кун никамӑн кӑмӑлне те пӑсмарӗ. Ӑмӑртӑва хутшӑнакансене ҫеҫ мар, Муркашри спорт уявне килнӗ ЧР физкультура, спорт, туризм министрне А. А. Николаева та килӗшрӗ вӑл. Муркаша вӑл ЧР Патшалӑх Канашӗн депутачӗпе, олимп чемпионкипе, хӑйӗн мӑшӑрӗпе Елена Николаевапа килчӗ. Анатолий Арсентьевич Муркашсене ҫак ӑмӑртӑва ҫулсеренех ҫӳллӗ шайра хатӗрленсе ирттернӗшӗн тав турӗ.

Муркашри спорт уявне ҫак кун Муркашри искусство шкулӗн воспитанникӗсемпе районти Культура ҫурчӗ ҫумӗнчи “Расна” эстрадӑпа фольклор ушкӑнӗн артисчӗсем илем кӳчӗҫ. Муркаш райповӗн обществӑлла апатлану предприятийӗсемпе куҫса ҫӳрекен магазинӗсем уява уяв сӗмӗ кӗртрӗҫ.

**Л. ПАВЛОВА.**

**01 пӗлтерет**

## Мунча ӑшши илӗртет-и?

Илӗртет пулсан пушар хӑрушлӑхӗ пирки самантлӑха та ан ман! Ҫапла чӗнсе-хушса калас килет сивӗ хӗл кунӗсем умӗн мунча ӑшшине кӑмӑллакансене юлашки вӑхӑтра шӑпах ҫак объектсенче “хӗрлӗ автан” вӑй илнӗ тӗслӗхсене тишкерсе пӗтӗмлетнӗ хыҫҫӑн.

Пушар хӑрушлӑхӗ мирлӗ пурнӑҫшӑн тӑрӑшакан кашни ҫыншӑнах паллӑ. Ҫакна курса-пӗлсе тӑратпӑр пулин те, тепӗр чух пушар хӑрушсӑрлӑх правилисем ҫине ҫителӗксӗр тимлӗх уйӑрни пысӑк инкеке алӑк уҫать.

Кӑҫал районта паянхи куна пурӗ 38 пушар пулчӗ пулсан, вӗсенчен 4-шӗ мунча хутнӑ чух тимлӗхе аларан вӗҫертнипе сӑлтавланаҫҫӗ. Август-сентябрь уйӑхӗсенче кӑна мунчасенче пулнӑ 3 пушар ҫак ыйтӑва ҫивӗчлетет кӑна. Мунча хутнӑ чух ҫунакан кӑмакана никам пӑхмасӑр хӑварнипех асӑннӑ вӑхӑтра Калайкассинчи пӗр ҫыннӑн хушма хуҫалӑхӗнче, Каршлӑхри мӑнастирте тата сентябрӗн 13-мӗшӗнче Ярапайкасси ял тӑрӑхӗнчи Ермак ялӗнче пушарсем тухрӗҫ. Юлашки тӗслӗхӗнче инкек пысӑк пулма та пултаратчӗ, анчах вӑхӑтра ҫитнӗ пушар машинисем ирӗке кайнӑ ҫулӑма ытти хуралтӑсем ҫине куҫмах памарӗҫ. Ҫак тӗслӗхсем район ҫыннисене мунча хутнӑ чух пушар хӑрушсӑрлӑхӗпе уйрӑмах тимлӗ пулмалли пирки калаҫҫӗ.

**И. СМИРНОВ,**
**районти патшалӑх пушар надзор уйрӑмӗн ертӳҫи.**

**Пӗлтерӳсем. Объявления**

**Хура-шурӑ тӗслӗ пӗрремӗш пӑруламалли ӗне сутатӑп. Тел.: 60-2-34.**

**Продаю двухкомнатную квартиру в д. Москакасы. Цена договорная.**
**Тел.: 8-917-651-92-51, 8-927-666-25-01.**

**Закупаю свинину. Тел.: 8-927-854-96-32, 2-13-77. 3-8.**

**Требуется парикмахер с опытом работы.**
**Тел.: 8-927-861-58-38, 8-927-847-85-59. 2-2.**

**Покупаем волосы 21 сентября с 10 до 14 часов в бане парикмахерская «Шарм». Тел.: 8-903-322-20-90.**

**Хура-шурӑ чупнӑ тынашка сутатӑп. Март пуҫламӑшӗнче пӑруламалла.**
**Атапай ялӗ, Киселева С.В., тел.: 2-19-98.**

**Продаю трактор МТЗ-80 на ходу, состояние отличное. Тел.: 8-927-666-86-58.**

**Ӗне тата кӑҫалхи тынашка сутатӑп. Москакасси ялӗ. Любимова Алевтина Ивановна. Тел.: 34-2-92.**

**Иккӗмӗш хут пӑруламалли ӗне сутатӑп. Шурӑпа хура тӗслӗ. Тел.: 8-905-343-16-22, 8-919-658-25-90.**

**МОРГАУШИ–МОСКВА (ЧЕРКИЗОВО)–МОРГАУШИ**
**На комфортабельных автобусах фирмы «Престиж» 2 раза в неделю (вторник, пятница) из с. Моргауши (отправление в 19 часов 40 минут) в Москву и обратно. Из Москвы отправление 13 часов 00 минут. Заказ билетов по тел.: 8-906-387-77-08, 2-12-82 (днем), 2-22-40 (вечером).**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:18 02 01:0094, местоположение: участок находится примерно в 530 м по направлению на юго-запад от ориентира кладбище, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Акрамовское сельское поселение, с. Акрамово, площадью 6100 кв. м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков к распределению на правах аренды:**

**1. Земельный участок, для ведения крестьянского (фермерского) хозяйства, разрешенное использование: для сельскохозяйственного производства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:14 01 05:0170, местоположение: участок находится примерно в 60 м по направлению на север от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д. Хорной, ул. Садовая, дом 1, площадью 10814 кв. м.**

**2. Земельный участок, для сельскохозяйственного производства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:14 01 05:0171, местоположение: участок находится примерно в 100 м по направлению на северо-запад от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, д. Хорной, ул. Садовая, дом 1, площадью 34677 кв. м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

«Герой» СХПК коллективӗпе профсоюз комитечӗ хуҫалӑхра нумай ҫул хушши вӑй хурса ӗҫленӗ

**Леонид Васильевич**
**АЛЕКСЕЕВ**

вилсе кайнӑ пирки унӑн ҫемйипе тата ҫывӑх тӑванӗсемпе пӗрле чӗререн хурланни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ.

**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ҪӖНТЕРӲ ЯЛАВӖ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Директор-главный редактор**
**А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3480.**
**Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану ҫулӗпе».**
**Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 18.09.2007 г.**
**Заказ**
**Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.**
**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.